28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 АВГУСТ 4 ШАМАТКУН 149(6900) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Виçӗ державӑн Берлинри конференцийӗ çинчен пӗлтерни

I.

1945 çулхи июлӗн 17-мӗшӗнче Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Президенчӗ Гарри С. Трумэн, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ Генералиссимус И. В. Сталин тата Великобританин Премьер-министрӗ Уинстон С. Черчилль Клемент Р. Эттлипе пӗрле Берлинри виçӗ енлӗ конференцире тӗл пулчӗç. Вӗсемпе пӗрле виçӗ Правительствӑн Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсем В. М. Молотов, Д. Ф. Бирнс господин, А. Иден господин, штаб начальникӗсем тата ытти советникӗсем те пулнӑ.

Июлӗн 17-мӗшӗпе 25-мӗшӗ хушшинче тӑхӑр лару пулса иртнӗ. Çакӑн хыççӑн конференци икӗ кунлӑха, Англири суйлавсен результачӗсене пӗлтерес вӑхӑтлӑха, чарӑннӑ пулнӑ.

Июлӗн 28-мӗшӗнче Эттли господин конференцие премьер-министр пулса таврӑнчӗ. Унпа пӗрле Ют çӗршыв ӗçӗсен çӗнӗ Министрӗ Э. Бевин господин пычӗ. Çакӑн хыççӑн тата тӑватӑ лару пулса иртрӗ. Конференци вӑхӑтӗнче виçӗ правительство Пуçлӑхӗсем тӑтӑшах тӗл пулса пычӗç, вӗсемпе пӗрле Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсем те пулчӗç. Кунсӑр пуçне тӑтӑшах Ют Çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсен канашлӑвӗсем пулса пычӗç.

Ыйтусене малтанлӑха хатӗрлесе хума уйӑрнӑ Ют Çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсен канашлӑвӗсем уйӑрнӑ комиссисем те çавӑн пекех кашни кунах ларусем туса ирттернӗ. Конференцин ларӑвӗсем Потсдам çывӑхӗнчи Сесилиан-Хофра пулса пычӗç.

Конференци 1945 çулхи августӑн 2-мӗшӗнче вӗçленчӗ.

Конференцире паха решенисемпе килӗшӳсем тунӑ. Ытти тӗрлӗ ыйтусем тӑрӑх та пӗр-пӗрин шухӑшӗсене палӑртнӑ. Çав ыйтусене малашне çак конференцире туса хунӑ Ют Çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсен Советӗнче сӳтсе-явмалла.

Президент Трумэн, Генералиссимус Сталин тата Премьер-министр Эттли виçӗ Правительство хушшинчи çыхӑнусене çирӗплетрӗç, вӗсем, килӗшсе ӗçлессине тата пӗр-пӗрне ӑнланассине анлӑлатнӑ конференцирен саланнӑ май, хӑйсен Правительствисемпе халӑхӗсем, Пӗрлешнӗ ытти Нацисемпе пӗрле тивӗçлӗ тата çирӗп мир туса хума пултарассине шанса тӑраççӗ.

II.

ЮТ ÇӖРШЫВ ӖÇӖСЕН МИНИСТРӖСЕН СОВЕТНЕ ТУСА ХУНИ

А. Конференци пилӗк тӗп державӑн Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсен Советне тума кирли çинчен каласса татӑлчӗ. Çав Совет мир ыйтуне йӗркелес тата, Совета хутшӑннӑ Правительствӑсем килӗшнӗ тӑрӑх, вӑхӑтран вӑхӑта çав Совета сӳтсе-явма тӑратакан ытти ыйтусене те татса парас тӗлӗшпе ӗçлемелле.

Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсен Советне туса хурасси çинчен йышӑннӑ килӗшӳре çапла каланӑ:

1. Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн, Китайӑн, Францин тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсенчен Совет туса хумалла.

2. а) Кулленхи вӑхӑтра Совет ларӑвӗсем Лондонра пулса иртеççӗ. Лондон Совет туса хума тивӗçлӗ Пӗрлешнӗ Секретариатӑн яланхи вырӑнӗ шутланать. Ют Çӗршыв Ӗçӗсен кашни Министрӗн Пысӑк Рангри Заместитель пулмалла, вӑл Ют Çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗ çук чухне унӑн ӗçӗсене туса пыма тивӗçлӗ полномочи илнӗ çын пулмалла. Кунсӑр пуçне техникӑллӑ сотрудниксен пысӑк мар штачӗ пулмалла.

в) Советӑн пирвайхи ларӑвӗ 1945 çулхи сентябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр Лондонра пулса иртмелле. Пӗтӗмӗшлӗн килӗшнӗ тӑрӑх, ларусем ытти столицӑсенче те пулса иртме пултараççӗ. Ку тӗлӗшпе вӑхӑтран вӑхӑта каласса татӑлма пулать.

3. а) Советӑн халех тумалли паха задачисенчен пӗри вӑл Итали, Румыни, Болгари, Венгри тата Финлянди пирки мирлӗ договорсем туса хатӗрлесе, вӗсене Пӗрлешнӗ Нацисем умне тӑратасси тата Европӑри вӑрçӑ вӗçленнӗ хыççӑн тавлашуллӑ территорисен ыйтӑвӗ тӑрӑх сӗнӳсем хатӗрлесси пулать. Германи тӗлӗшпе мир тӑвассине хатӗрлес ӗçре Советпа усӑ курмалла пулать. Çав документа Германире тивӗçлӗ правительство туса хунӑ хыççӑн çав Правительствӑн йышӑнмалла.

в) Çак задачӑсенчен кашнине татса паракан Совета, членсем пулса, пӗр сӑмахсӑрах парӑнни çинчен калакан условие алӑ пуснӑ государствӑсен—çак задача пырса тивекен тӑшманла государствӑна хупса çырнӑ условисене алӑ пуснӑ государствӑсен представителӗсем кӗреççӗ. Италипе мир тӑвас ыйтусене пӑхса тухнӑ чухне Францие Итали парӑнмалли условисене алӑ пуснӑ çӗршыв тесе шутлаççӗ. Ытти членсене Совета вӗсене тӳрремӗнех пырса тивекен ыйтусене пӑхса тухнӑ чухне чӗнеççӗ.

с) Ытти ӗçсене Совет членӗ шутӗнче тӑракан Правительствӑсем килӗшнӗ тӑрӑх Совета вӑхӑтран вӑхӑта парса тӑраççӗ.

4. а) Совет членӗнче тӑман государствӑна тӳрремӗнех пырса тивекен ыйтӑва Советра пӑхса тухнӑ чухне çавӑн пек государствӑна ыйтӑва пӑхса тухас ӗçе хутшӑнма хӑйӗн представителӗсене уйӑрса яма чӗнмелле.

в) Хӑйӗн ӗçне туса пырассине Совет хӑй пӑхса тухакан пӗр-пӗр ыйту уйрӑмлӑхӗпе çыхӑнтарма пултарать. Хӑшпӗр чухне ыйтӑва малтанлӑха вӑл хӑй пӗччен, ыйтупа интересленекен ытти государствӑсене хутшӑнтаричченех, пӑхса тухма пултарать. Ытти чухне Совет пӗр-пӗр ыйтӑва татса парассипе интересленекен государствӑсен официальнӑй конференцине пухма пултарать.

В. Конференци йышӑннӑ решени тӑрӑх, виçӗ Правительствӑран кашниех пӗр пек çырса, Китайпа Франци Правительствисене çак текста йышӑнма тата Совет туса хунипе килӗшме чӗнсе каланӑ.

С. Çакӑнта кӑтартнӑ паллӑ ӗçсене туса пыма Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсен Советне туса хуни Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн тата Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсем вӑхӑтран вӑхӑта консультацисем туса ирттермелли пирки Крымри конференцире йышӑннӑ килӗшӗве хирӗç пымасть.

Д. Конференци çавӑн пекех Ют Çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗсен Советне туса хурасси çинчен килӗшнӗ май Европӑри Консультаци Комиссийӗ тӗлӗшпе тӑракан ыйтӑва пӑхса тухрӗ. Германи пӗр сӑмахсӑрах парӑнасси çинчен, Германипе Австрие оккупацилемелли Зонӑсем çинчен тата çав çӗршывсенчи союзниксен контроль механизмӗ çинчен калакан сӗнӳсем панипе Комисси хӑйӗн тӗп задачисене ӑнӑçлӑн татса пачӗ тесе кӑмаллӑн палӑртнӑ. Çапла йӗрке тунӑ: Германипе Австрие контроллес тӗлӗшпе союзниксен политикине йӗркелемелли малашнех ӗçсене Берлинри Контроль Совечӗ тата Венӑри Союзниксен Комиссийӗ туса пымалла. Çавна пула вара Европӑри Консультаци Комиссине салатмалла тесе сӗннӗ.

III.

ГЕРМАНИ ÇИНЧЕН

Союзниксен çарӗсем пӗтӗм Германи çӗрне оккупацилесе тӑраççӗ. Германи халӑхӗ хӑйне ертсе пыракан çынсем пуç пулса тӑнӑ вӑхӑтра тунӑ тискер преступленисемшӗн ответ тытма пуçларӗ. Çав çынсем ӑнӑçусем тунӑ вӑхӑтра Германи халӑхӗ уççӑнах çав çынсене ырласа тата вӗсене пӗр сӑмахсӑрах пӑхӑнса тӑчӗ.

Çӗнтернӗ Германире Союзниксем контроль туса тӑнӑ вӑхӑтра Союзниксен пӗрлешӳллӗ политикине тытса пымалли политикӑпа экономика принципӗсем тӗлӗшпе Конференцире каласса татӑлнӑ.

Çак Килӗшӳн тӗллевӗ Германи пирки йышӑннӑ Крымри Декларацие пурнӑçа кӗртесси пулса тӑрать. Германи милитаризмӗпе нацизмне тӗппипех пӗтерсе тӑкмалла. Союзниксем пӗр-пӗринпе килӗшсе, Германи хӑйӗн кӳршисене тата пӗтӗм тӗнчери мирӗ урӑх нихӑçан та хӑратса тӑма ан пултартӑр тесе, халӗ те, малашне те тивӗçлӗ ытти мерӑсене те йышӑнма пултараççӗ.

Союзниксем нимӗç халӑхне пӗтерсе тӑкма е чуралӑха кӗртсе ӳкерме шутламаççӗ. Союзниксем нимӗç халӑхне малашне хӑйӗн пурнӑçне демократипе мир никӗсӗ çинче урӑхлатса çӗнетме хатӗрленес тӗлӗшпе майсем пама шутлаççӗ. Германи халӑхӗ пӗрмаях çав тӗллеве пурнӑçа кӗртме тӑрӑшса пырсан, хӑй вӑхӑтӗнче вӑл ирӗклӗ тата тӗнчери мире юратакан халӑхсем хушшинче хӑйӗн вырӑнне йышӑнма пултарать.

Килӗшӳре çапла каланӑ:

КОНТРОЛЛЕСЕ ТӐРАКАН ГЕРМАНИЕ ТЫТКАЛАССИ ПИРКИ МАЛТАНХИ ТАПХӐРТА ПУРНӐÇА КӖРТСЕ ПЫМАЛЛИ ПОЛИТИКӐПА ЭКОНОМИКА ПРИНЦИПӖСЕМ

А. ПОЛИТИКА ПРИНЦИПӖСЕМ

1. Германие контроллесе тӑмалли механизм çинчен йышӑннӑ Килӗшӳ тӑрӑх, Германири аслӑ власть Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн, Франци республикин хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен Главнокомандующисен аллинче пулать. Вӗсенчен кашни, хӑйсен тивӗçлӗ Правительствисем панӑ инструкцисем тӑрӑх, хӑйӗн оккупаци зонинче влаçа тытса тӑрать, пӗтӗм Германие пырса тивекен ӗçсене вара вӗсем пурте пӗрле, Контроль Совечӗн членӗсем пулса, хутшӑнаççӗ.

2. Май килнӗ таран Германие тытса тӑрас йӗрке пӗтӗм Германири нимӗç халӑхӗ тӗлӗшпе пӗр пек пулмалла.

3. Контроль Совечӗ асра тытса ӗçлемелли тӗллевсем, Германие оккупацилемелли тӗллевсем çаксем пулса тӑраççӗ:

1) Германи милитаризмне тата Германин çар производстви тӗлӗшпе усӑ курма май пур пӗтӗм промышленноçне пӗтерсе тӑкасси е ӑна контроллесе тӑрасси, Германие тӗппипех хӗçпӑшалсӑрлантарасси. Çав шутпа:

а) Германин çар йӑлисене упраса хӑварма пулӑшакан çӗр çинчи, тинӗçри тата сывлӑшри хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсене пурне те, СС, СА, СД тата гестапӑна вӗсен пӗтӗм организацийӗсемпе, штабӗсемпе тата учрежденийӗсемпе пӗрле, вӑл шутрах Генеральнӑй Штаба, офицерсен корпусне, резервистсен корпусне, çар училищисене, вӑрçӑ ветеранӗсен организацийӗсене тата çарпа çурма çар организацийӗсене, вӗсен клубӗсемпе тата ассоциацийӗсемпе пӗрле, пӗтӗмӗшпех тата яланлӑхах пӗтерсе лартмалла. Çапла вара Германи милитаризмӗпе нацизмне урӑх нихӑçан та çӗкленме памалла мар е урӑхлатса çӗнетмелле мар туса хумалла;

в) мӗнпур хӗçпӑшала, салтак тумӗсене, вӑрçӑ хатӗрӗсене тата ятарласа тӑвакан япаласене союзниксен аллине памалла е пӗтерсе тӑкмалла. Самолетсем тата тӗрлӗ хӗçпӑшалпа çар хатӗрӗсем тӑвассине пӗтӗмӗшпех чарса лартмалла.

2) Нимӗç халӑхне вӑрçӑра вӑл тӗппипех поражени тӳснине, вӑл хӑй тунӑ айӑпсемшӗн ответ тытмасӑр юлма пултарайманнине ӑнлантармалла. Вӑрçӑра вӑл пӗр шеллемесӗр вӑрçнӑ пирки тата нацистсем ухмаха ерсе хирӗç тӑнӑ пирки Германи экономики арканса кайнӑ, çавӑнпа та нимӗç халӑхӗ хурлӑх курасси тата йӗркесӗрлӗх пулса тӑнӑ.

3) Национал-социалистсен партипе унӑн филиалӗсене тата вӑл контроллесе тӑракан организацисене пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкмалла, нацистла учрежденисене пурне те салатса ямалла. Вӗсем нипеле формӑпа та нихӑçан та чӗрӗлмелле мар туса, нацистла е милитаристла ӗçсене е вӗсен пропагандине пачах пӗтерсе хумалла.

4) Германири политикӑллӑ пурнӑçа демократиллӗ никӗс çинче татӑклӑнах çӗнетсе урӑхлатма тата пӗтӗм тӗнчери пурнӑçра Германи мирлӗн пӗрлешсе ӗçлемелле тума хатӗрленсе çитмелле.

4. Гитлерла режимӑн никӗсӗ пулса тӑнӑ нацистла пур законсене те, рассӑ, тӗн е политикӑллӑ ӑнлану пирки хӗсӗрлекен законсене пурне те пӑрахӑçа кӑлармалла. Çавӑн пек хӗсӗрленине нихӑш енӗпе те тӳсме çук.

5. Вӑрçӑ преступникӗсене тата вӑрçӑ преступленийӗсемпе тискерлӗхсем тӑвас енӗпе нацистсен мероприятийӗсене планлас ӗçе е вӗсене пурнӑçа кӗртес ӗçе хутшӑннӑ çынсене пурне те арестлесе суда памалла. Нацистсен пуçлӑхӗсене, нацистсем майла пыракан паллӑ çынсене тата нацистла учрежденисемпе организацисен ертсе пыракан составне тата оккупаци тӗллевӗсемшӗн хӑрушӑ ытти кирек епле çынсене те арестлесе хупса хумалла.

6. Нацистла парти членӗсене пурне те, вӗсем унӑн членӗнче ячӗшӗн çеç мар тӑнӑ пулсан, тата союзниксен тӗллевӗсемшӗн тӑшманла ытти пур çынсене те обществӑллӑ е çурма обществӑллӑ должноçсенчен, уйрӑм çынсен паллӑ предприятийӗсенчи ответлӑ вырӑнсенчен кӑларса пӑрахмалла. Çакӑн пек çынсем вырӑнне политикӑпа мораль тӗлӗшӗнчен Германире чӑн-чӑн демократиллӗ учрежденисем туса аталантарас енӗпе пултаруллӑ шутланакан çынсене уйӑрса лартмалла.

7. Германири халӑха вӗрентес ӗçе çапла контроллесе тӑмалла: нацистла тата милитаристла шухӑшсене пӗтӗмпех пӑрахӑçа кӑлармалла, демократиллӗ идейӑсене ӑнӑçлӑн аталантарма майсем туса памалла.

8. Суд йӗркине демократипе тӗрӗслӗх йӗркисем тӑрӑх, рассине-мӗнне, мӗнле халӑх пулнине тата мӗнле тӗн тытнине пӑхмасӑр, пур гражданесем те пӗртан шутланакан закон никӗсӗ çинче урӑхлатса çӗнетмелле.

9. Германири тытӑм йӗркине, политика структурине сапаласа пырас енӗпе тата вырӑнсенче ответлӑх туйӑмне аталантарас енӗпе туса пымалла. Çак шутпа:

1) Пӗтӗм Германийӗпех демократи никӗсӗ çинче вырӑнти самоуправлени аталанмалла. Вӑл ӗç, сӑмахран, суйланӑ советсем урлӑ, вӑрçӑ хӑрушсӑрлӑхне упрассипе тата оккупаци тӗллевӗсемпе килӗшсе пынӑ чухлӗ хӑвӑрт пулмалла.

2) Пӗтӗм Германийӗпе демократиллӗ политикӑллӑ партисене пурне те ирӗк парса пулӑшмалла, вӗсене пухусем пухма тата халӑхпа çыхӑнма ирӗк памалла.

3) Районсенчи, провинцисенчи управленисене тата уйрӑм çӗрсен управленийӗсенче представительсем суйласа лартас принципсемпе усӑ курни вырӑнти самоуправленире мӗн чухлӗ усӑллӑ пулнине шута илсе, çав принципсене пурнӑçа кӗртсе пымалла.

4) Халлӗхе Германин нимӗнле центральнӑй правительстви те пулмасть. Анчах апла пулин те, государство секретарӗсем ертсе пыракан Германи администрацийӗн хӑшпӗр центральнӑй департаменчӗсене, вӗсем питӗ кирлӗ пулнӑ пирки, туса хумалла пулать, сӑмахран: финанс, транспорт, коммуникаци, тулашри суту-илӳпе промышленность департаменчӗсем тумалла пулать. Çав департаментсене Контроль Совечӗ ертсе пымалла.

10. Вӑрçӑ хӑрушсӑрлӑхне упраса тӑрассине шута илсе, сӑмах, пичет тата тӗн ирӗклӗхӗ параççӗ, тӗн учрежденийӗсене хисеплемелле тӑваççӗ. Вӑрçӑ хӑрушсӑрлӑхне упраса тӑрассине шута илсе, ирӗклӗ профсоюзсем тума ирӗк параççӗ.

В. ЭКОНОМИКА ПРИНЦИПӖСЕМ

11. Германин вӑрçӑ вӑй-хӑватне пӗтерсе лартас шутпа, хӗçпӑшалсем, вӑрçӑ хатӗрӗсемпе вӑрçӑ орудийӗсем, çавӑн пекех тӗрлӗ самолетсемпе тинӗç суднисем туса кӑларассине чарса лартмалла. Металлсем, хими продукчӗсем, машинӑсем тата тӳрремӗнех çар экономикипе çыхӑннӑ ытти тӗрлӗ япаласем туса кӑларассине çирӗп контроллесе тӑмалла тата вӗсене Германин вӑрçӑ хыççӑнхи ыйтӑвӗсене тивӗçтерме, 15-мӗш пунктра çырса кӑтартнӑ тӗллевсене пурнӑçа кӗртме кирлӗ таран кӑна туса кӑлармалла тӑвас пулать. Ӗçлеттерме ирӗк панӑ промышленность валли кирлӗ мар производство хавачӗсене Союзниксен Репараци Комиссийӗ сӗннӗ тата çав ӗçпе интересленекен правительствӑсем çирӗплетнӗ репараци планӗ тӑрӑх е туртса илмелле е, туртса илмесен, пӗтерсе тӑкмалла.

12. Экономика вӑйӗсем ытлашши пухӑнса пӗтӗçнине, уйрӑмах картельсемпе синдикатсем, трестсем тата ытти тӗрлӗ монополи килӗшӗвӗсем урлӑ пӗтӗçнине пӗтерсе тӑкас шутпа, Германи экономикине питех те кӗске вӑхӑтра нумай тӗрлӗ вырӑнсене салатса вырнаçтарса тухмалла.

13. Германи экономикине организацилленӗ чухне ялхуçалӑхне тата шалти халӑх валли кирлӗ мирлӗ промышленноçа аталантарасси çине ытларах çавӑрӑнса пӑхмалла.

14. Оккупаци тапхӑрӗнче Германие экономика тӗлӗшӗнчен пӗрлӗхлӗ çӗршыв вырӑнне хурса шутласа тӑмалла. Çав шутпа аялтарах кӑтартнӑ çак ӗçсем тӗлӗшпе пӗрлӗхлӗ политика туса хумалла:

а) сӑрт-ту продукцийӗпе çав продукцирен япаласем туса кӑларас тӗлӗшпе тата вӗсене вырнаçтарас тӗлӗшпе;

в) ялхуçалӑхӗпе вӑрман лартса тӑвас тата пулӑ тытас ӗçсем тӗлӗшпе;

с) ӗçукçипе хаксем тӗлӗшпе тата çав хаксене тӑвас тӗлӗшпе;

д) пӗтӗм Германие япаласем туртарса пырас тата Германирен япаласем туртарса тухас программа тӗлӗшпе;

е) централизациленӗ налогсемпе пошлинӑсен, укçа-тенкӗн тата банксен системи тӗлӗшпе;

ф) репарацисем тӗлӗшпе тата çар промышленноçӗн хӑватне пӗтерес тӗлӗшпе;

ы) транспортпа çулйӗрсем тӗлӗшпе.

Çак политикӑна пурнӑçа кӗртсе пынӑ чухне кирлӗ таран вырӑнти тӗрлӗ условисене шута илмелле.

15. Германи экономикине союзниксем енчен контроллесе тӑмалла, çав ӗçе çак тӗлӗшпе туса пымалла:

а) индустрие хӗçпӑшалсӑрлантарас тата Германин çар вӑй-хӑватне пӗтерес тӗлӗшпе репарацисем шыраса илес тата ирӗк панӑ таварсене Германирен туртарса тухас е Германие туртарса пырас программӑна пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе;

в) таварсем туса кӑларас тӗлӗшпе тата оккупациллӗ вӑйсен, Германире вырӑнтан-вырӑна куçарнӑ çынсен нушисене тивӗçтерме кирлӗ ӗçсене, Германире Европӑри çӗршывсенчи вӑтам пурнӑç виçинчен иртсе кайман вӑтам пурнӑç виçине тытса тӑма кирлӗскерсене, туса пырас тӗлӗшпе (Европӑри çӗршывӗсен шутне, Пӗрлешӳллӗ Королевствӑпа Совет Союзӗсӗр пуçне, Европӑри пур çӗршывсем те кӗреççӗ);

с) Контроль Совечӗ тунӑ йӗрке тӑрӑх тӗп япаласене тӗрлӗ зонӑсем хушшинче пӗр пек валеçессине пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе, çак ӗçе ӑна мӗнпур Германире экономикӑна пӗр пек виçеллӗ тӑвас шутпа тата Германие туртарса пыракан япаласен виçине чакарас шутпа пурнӑçа кӗртмелле;

д) Германи промышленноçне, экономика тата финанс енӗпе ытти çӗршывсемпе тунӑ мӗнпур килӗшӳсене контроллесе тӑрас тӗлӗшпе, ку шута экспортпа импорт та кӗреççӗ. Çав экспортпа импорта Германин çар вӑй-хӑвачӗ аталанассине чарса лартас тата çакӑнта кӑтартнӑ ытти задачӑсене пурнӑçа кӗртес шутпа туса пымалла;

е) Германири мӗнпур обществӑллӑ е уйрӑм çынсен учрежденийӗсене, наукӑпа тӗпчев учрежденийӗсемпе опытсем тӑвакан учрежденисене, экономика ӗçӗпе çыхӑннӑ лабораторисемпе ытти тӗрлӗ учрежденисене контроллесе тӑрас тӗлӗшпе.

16. Контроль Совечӗ тунӑ экономика контрольне туса пыма Германи администраци аппаратне туса хумалла тата Германи влаçӗсене çав аппарата ӗçре кирлӗ таран тытса пыма сӗнмелле. Çапла вара Германи халӑхне çав управление тытса пырассишӗн тата ӑна пӑснишӗн ответлӑх пӗтӗмӗшпех ун çинче тӑнине ӑнлантарса памалла. Оккупаци тӗллевӗсене хирӗçлекен кирек мӗнле Германи управленине те чарса лартмалла.

17. Çак ӗçсем тӗлӗшпе халех тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнмалла:

а) транспорта кирлӗ пек юсас тӗлӗшпе;

в) çӗркӑмрӑкӗ кӑларассине ӳстерес тӗлӗшпе;

с) ялхуçалӑх продукчӗсем тӑвассине май килнӗ таран ытларах ӳстерес тӗлӗшпе тата

д) пурӑнмалли çуртйӗрсене тата коммунальнӑй тӗп предприятисене васкавлӑн юсас тӗлӗшпе.

18. Германин тулашри тупӑшӗсене, Германие хирӗç вӑрçнӑ Пӗрлешнӗ Нацисен контролӗ аллине халлӗхе пырса кӗменскерсене, алла илес тӗлӗшпе контроль Совечӗн тивӗçлӗ ӗçсем туса ирттермелле.

19. Репараци тӳлесе татнӑ хыççӑн Германи халӑхне тулашран пулӑшмасӑрах пурӑнма май памалӑх çителӗклӗ ресурссем хӑвармалла. Германин хуçалӑх планне тунӑ чухне Германие япаласем туртарса пыма кирлӗ средствӑсем хӑвармалла, çав ӗçе Германири Контроль Совечӗ пӑхса тухса йышӑнмалла. Германирен кулленхи производство продукчӗсем тата тавар запасӗсем туртарса кайнинчен кӗрекен укçа-тенкӗ, пуринчен малтан, Германие туртарса пынӑ япаласемшӗн тӳленӗ çӗре каймалла.

Кунта кӑтартнӑ условисемпе Германи вӑрçӑ тӑкакӗсемшӗн тӳлесси çинчен тунӑ килӗшӗвӗн 4-мӗш а (тата 4-мӗш в) пунктсенче кӑтартнӑ оборудованипе продуктсем тӗлӗшпе усӑ курмалла мар.

IV.

ГЕРМАНИРЕН ВӐРÇӐ ТӐКАКӖСЕНЕ ШЫРАСА ИЛЕССИ

Германи Пӗрлешнӗ Нацисене кӳнӗ пысӑк сиенсемпе асапсемшӗн Германие май килнӗ таран ытларах тӳлеттермелле тӑвасси çинчен Крымри конференцире йышӑннӑ решени тӑрӑх (çав сиенсемпе асапсемшӗн Германи халӑхӗ ответ тытмасӑр юлма пултараймасть), Германирен вӑрçӑ тӑкакӗсене шыраса илес тӗлӗшпе çакӑн пек килӗшӳ тунӑ:

1. ССР Союзӗ Германирен шыракан тӑкаксене ССР Союзӗ оккупациленӗ Германи зонисенчен тата Германин ют çӗршывсенчи тивӗçлӗ тупӑшӗсенчен шыраса илет.

2. Польша шыракан тӑкаксене ССР Союзӗ хӑй шыраса илнӗ репараци шутӗнчен тӳлет.

3 Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Пӗрлешӳллӗ Королевство шыракан тӑкаксене тата тӑкаксем шыраса илме тивӗçлӗ ытти çӗршывсем хӗвеланӑçӗнчи зонӑсенчен тата Германин ют çӗршывсенчи тивӗçлӗ тупӑшӗсенчен шыраса илеççӗ.

4. Совет Союзӗ хӑй оккупациленӗ зонӑсенчен шыраса илекен репарацисӗр пуçне тата хӗвеланӑçӗнчи зонӑсенчен шыраса илет.

а) Промышленноçри усӑ курма юрӑхлӑ тата комплектлӑ капитальнӑй оборудованин, пуринчен малтан, Германири мирлӗ хуçалӑх валли кирлӗ мар металлурги, хими тата машиностроени отраслӗсенчи капитальнӑй оборудованин, Германири хӗвеланӑç зонисенчен пурпӗрех илсе кайма тивӗçлӗскерӗн, 15 процентне илет, çав оборудование апат-çимӗçпе, кӑмрӑкпа, поташпа, цинкпа, йывӑç материалсемпе, тӑмран тунӑ япаласемпе, нефть продукчӗсемпе тата ытти тӗрлӗ материалсемпе эквивалентлӑ хак тӑрӑх улӑштарса илет, çак ӗç пирки уйрӑмӑн каласса татӑлмалла пулать.

в) Германири мирлӗ экономикӑна кирлӗ мар пулса тӑракан тата хӗвеланӑçӗнчи зонӑсенчен илсе кайма тивӗçлӗ пулса тӑракан промышленноçри капитальнӑй оборудованин 10 процентне Совет Союзӗ илет, çав оборудование Совет правительствин аллине пӗр тӳлевсӗрех е пӗр-пӗр япалапа улӑштармасӑрах репараци шучӗпе памалла.

Çӳлерехре «а» тата «в» параграфсенче кӑтартнӑ оборудование пӗтӗмпех пӗр вӑхӑтра илмелле.

5. Хӗвеланӑçӗнчи зонӑсенчен репараци шучӗпе мӗн чухлӗ оборудовани илессине хальхи вӑхӑтран пуçласа 6 уйӑхран кая юлмасӑр палӑртмалла.

6. Промышленноçри капитальнӑй оборудование илсе тухас ӗç май килнӗ таран хӑвӑртрах пуçланмалла, çав ӗçе 5-мӗш параграфра кӑтартнӑ решение йышӑннӑ хыççӑн икӗ çул хушшинче вӗçлемелле. 4-мӗш «а» параграфра кӑтартнӑ продуктсене Совет Союзӗ, туса кӑларнӑ май, каласса татӑлнӑ тӑрӑх, Германие çӳлте асӑннӑ кунран пуçласа 5 çул хушши ушкӑнӑн-ушкӑнӑн парса тӑрать. Германин мирлӗ экономикине кирлӗ мар пулса тӑракан, çавӑнпа та вара унтан туртарса кайма тивӗçлӗ пулса тӑракан промышленноçри капитальнӑй оборудовани мӗн чухлӗ, вӑл мӗнле оборудовани пулассине Контроль Совечӗ репарацисем тӗлӗшпе Союзлӑ Комисси Франци хутшӑннипе йышӑннӑ политика тӑрӑх татса памалла, çакӑнна пӗрлех татӑклӑ решение оборудовани туртарса тухакан зонӑн командующийӗ йышӑнать.

7. Илсе тухма тивӗçлӗ оборудовани мӗн чухлӗ пулассине палӑртаччен 6-мӗш пунктӑн юлашки сӑмахӗнче кӑтартнӑ йӗрке тӑрӑх илсе тухма тивӗçлӗ тесе шутланакан оборудование аванс шучӗпе илсе тухмалла.

8. Германин хӗвеланӑç зонинчи предприятийӗсен акцийӗсенчен, çавӑн пекех тата Германин мӗнпур ют çӗршывсенчи тупӑшӗсенчен те (ку шута 9-мӗш пунктра кӑтартнӑ ют çӗршывсем кӗмеççӗ) Совет правительстви нимӗн те шыраса илме шутламасть.

9. США-па Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн правительствисем Германин хӗвелтухӑç зонинчи предприятийӗсен акцийӗсенчен, çавӑн пекех тата Германин Болгарири, Финляндири, Венгрири, Румынири тата Хӗвелтухӑç Австрири тупӑшӗсенчен нимӗн те шыраса илме шутламаççӗ.

10. Союзниксен çарӗсем Германире тытса илнӗ ылттӑна Совет правительстви ыйтма шутламасть.

V.

ГЕРМАНИ ФЛОЧӖПЕ СУТУ-ИЛӲ СУДНИСЕМ

Конференци, пӗтӗмӗшпе илсен, Германин парӑннӑ флочӗпе тата суту-илӳ суднисемпе усӑ курмалли мероприятисем çинчен каласса татӑлнӑ. Ку тӗлӗшпе çапла йышӑннӑ: виçӗ Правительство экспертсем уйӑрса лартмалла, вӗсем, пӗрле ӗçлесе, килӗшсе татӑлнӑ принципсене пурнӑçа кӗртмелли плансене тӗплӗн туса çитермелле. Çитес тапхӑрта виçӗ Правительство пӗр вӑхӑтрах пӗрлешсе тепӗр пӗлтерӳ пичетлесе кӑлараççӗ.

VI.

КЕНИГСБЕРГ ХУЛИПЕ УН ÇЫВӐХӖНЧИ РАЙОН

Территори ыйтӑвӗсене мирлӗн татса парасси çинчен татӑклӑн решени йышӑниччен, Совет Союзӗн Балтика тинӗсӗ çывӑхӗнчи хӗвеланӑç чиккин пӗр пайӗ Данциг бухтин хӗвеланӑç çыранӗнчен пуçласа хӗвелтухӑçнелле — Браунсберг-Гольдапран çурçӗртерехре Литва, Польша республикисен тата Хӗвелтухӑç Пруссин чиккисем пӗрлешнӗ çӗре тухмалли çинчен Совет Правительстви сӗннӗ сӗнӗве конференци пӑхса тухрӗ.

Пӗтӗмӗшпе илсен, конференци Кенигсберг хулипе ун çывӑхӗнчи района, çӳлте кӑтартнӑ пек, Совет Союзне пама Совет Правительстви сӗннипе килӗшрӗ. Анчах та чикӗсене тӗплӗн палӑртассине экспертсем тӗпчесе пӗлмелле.

США президенчӗ тата Великобританин премьер-министрӗ çывӑх вӑхӑтра ку ыйтӑва мирлӗн татса панӑ чухне Конференцин çак сӗнӗвне хута кӗреççӗ, тесе пӗлтерчӗç.

VII.

ВӐРÇӐ ПРЕСТУПНИКӖСЕМ ÇИНЧЕН

Виçӗ Правительство çакна палӑртрӗç: юлашки эрнесем хушшинче Лондонра Британи, Америка, Совет Союзӗ тата Франци представителӗсем 1943 çулхи октябрь уйӑхӗнчи Мускав Декларацийӗ тӑрӑх географиллӗ пӗр-пӗр паллӑ вырӑнта айӑпа кӗмен вӑрçӑ преступникӗсене суд тумалли меслетсем çинчен килӗшӳ тӑвас ыйтӑва сӳтсе-явнӑ. Виçӗ правительство хӑйсем çав преступниксене хӑвӑртрах тӗрӗслӗх сучӗ аллине пама шутланине тепӗр хут çирӗплетсе калаççӗ. Лондонри каласусем хыççӑн часах килӗшӳ пулӗ тесе, вӑрçӑ преступникӗсене май килнӗ таран хӑвӑртрах суд тӑвасси питӗ пысӑк ӗç пулса тӑрать, тесе вӗсем шанса тӑраççӗ. Айӑпланакансен пӗрремӗш спискине кӑçалхи сентябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пичетлесе кӑлараççӗ.

VIII.

АВСТРИ ÇИНЧЕН

Конференци Австрин вӑхӑтлӑх правительствин влаçӗ пӗтӗм Австрие сарӑлмалла тесе Совет Правительстви сӗннипе пӑхса тухрӗ.

(Юлашки 2-мӗш страницӑра.)

Виçĕ державăн Берлинри конференцийĕ çинчен пĕлтерни

Юлашки. Пуçламĕшĕ 1-мĕш страницăра.

Виçĕ Правительство çапла килĕшрĕç: çак ыйтăва вĕсем Британипе Америка çарĕсем Вена хулине пырса кĕнĕ хыççăн пăхса тухма хатĕр тăраççĕ.

IX.
ПОЛЬША ÇИНЧЕН

Конференци Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительствипе çыхăнса тăракан тата Польшăн хĕвеланăç чиккипе çыхăнса тăракан ыйтусене пăхса тухрĕ.

Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительстви пирки хăйсен шухăшĕсене вĕсем çапла каласа пачĕç:

А. Польшăри тата ют çĕршывсенчи поляксен представителĕсем килĕшнине эпир тулли кăмăлпа йышăнтăмăр. Çак килĕшĕве пула, Крымри конференцире йышăннă тăрăх Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительствине туса хума май пулчĕ. Вăл правительствăна виçĕ Держава йышăннă. Британи Правительствине Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви Польшăн вăхăтлăх правительствипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçлани вĕсем поляксен Лондонри правительствине йышăнма пăрахнине пĕлтерет. Поляксен Лондонри правительстви халĕ текех çук.

Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани Правительствисем Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительствин, Польша Государствин чăн-чăн правительстви пулса тăраканскерĕн, Англипе Америка территорийĕ çинче тата вĕсем контроллесе тăракан çĕрте упранакан кирек епле пурлăхне те упраса хăварас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Çав пурлăха ыттисене памалла мар тăвас тесе, вĕсем тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительствине Польша государствин пурлăхĕ шутланакан кирек епле пурлăха та, ăна законсăр туртса илнĕ пулсан, юридически яланхи мерăсене йышăнса калла тавăрма пур майсене те туса параççĕ.

Виçĕ Правительство Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительствине ют çĕршывсенче пурăнакан пур поляксене те, вĕсем Польшăна таврăнас теççĕ пулсан, май килнĕ таран хăвăртрах таврăнма çăмăллатас енĕпе пулăшма тăрăшаççĕ. Ку шута Польшăн хĕçпăшаллă вăйĕсен членĕсемпе суту-илӳ флочĕ те кĕрет. Таван çĕршыва таврăнакан поляксене уйрăм харпăрлăх тĕлĕшпе ытти поляк гражданĕсемпе пĕр тан правăсем параççĕ.

Виçĕ держава çакна шута илеççĕ: Крымри конференци решенийĕ тăрăх, Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительстви май килнĕ таран хăвăртрах ирĕклĕ те пиминĕпе чăрмантарман, пĕтĕм халăха суйлав прави парса, вăрттăн сасăласа суйлавсем ирттерме килĕшнине асра тытса тăраççĕ. Вăл суйлавсене демократиллĕ тата нацистсене хирĕçле пур партисем те хутшăнма, хăйсен кандидачĕсене тăратма тата союзниксен пичечĕн представителĕсене суйлавччен тата суйлавсем пынă вăхăтра Польшăри лару-тăру çинчен пĕтĕм тĕнчене пĕлтерсе тăма ирĕк парассине асра тытса тăраççĕ.

В. Польшăн хĕвеланăç чикки пирки çакăн пек килĕшсе татăлнă:

Крымри конференцире Польша пирки тунă килĕшĕве шута илсе, виçĕ Правительствăн пуçлăхĕсем Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительстви Польша валли çурçĕрте тата хĕвеланăçĕнче территори илме шутланине пăхса тухрĕç. Польша халăх совечĕн председательне тата Польшăн Халăх Пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительствин членĕсене конференцире йышăннă май, вĕсем хăйсен шухăшĕсене пĕтĕмĕшпех каласа пачĕç. Виçĕ Правительство пуçлăхĕсем Польшăн хĕвеланăç чиккине татăклăн туса парассине мирлĕ конференциччен хăварма кирлĕ тесе йышăнчĕç.

Виçĕ Правительствăн пуçлăхĕсем çапла килĕшрĕç: Польшăн хĕвеланăç чиккисене татăклăн туса хуриччен, Германи алăнче пулнă территорисем—Балтика тинĕсĕнчен пуçласа, Свинемюнде хулинчен кăшт хĕвеланăçнерехре тата унтан Одер шывĕпе Хĕвеланăç Нейсе шывĕ тăрăх Чехословаки чикки патне çитиччен пыракан линине,—Польша государстви аллинче пулмалла, çавăнпа та вăл территорисене Совет Союзĕ оккупациленĕ Германи территорийĕ шутне кĕртмелле мар. Ку шута Берлинри конференци решенийĕсем тăрăх Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн аллине паман Хĕвелтухăç Пруссин пĕр пайĕ тата ирĕклĕ Данциг хулин территорийĕ те кĕрет.

X.
МИРЛĔ ДОГОВОРСЕМ ТĂВАССИ ТАТА ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН ОРГАНИЗАЦИНЕ ЙЫШĂНАССИ ÇИНЧЕН

Европăри вăрçă çĕнтерӳпе вĕçленнĕ хыççăн мĕн май килнĕ таран хăвăртрах вăраха пыракан мир тума кирлĕ условисем туса хурас тĕлĕшри пĕтĕмĕшле политика пирки конференци çапла каласа пама йышăнчĕ.

Виçĕ Правительство çапла шутлаççĕ: Италин, Болгарин, Финляндин, Венгрин тата Румынин хальхи тивĕççĕр лару-тăруне мирлĕ договорсем тунипе пĕтермелле. Ытти союзниксен çак ыйтупа интересленекен Правительствисем ку шухăшпа килĕшессине виçĕ Правительство шанса тăраççĕ.

Виçĕ Правительство, хăйсем енчен, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕ пăхса тухмалли чи васкавлă та чи паха задачăсен шутне, чи пирвайхи задача выранне хурса, Италипе тумалли мирлĕ договора туса хатĕрлес ыйтăва кĕртнĕ. Тĕнĕл держависенчен Итали чи малтан Германипе çыхăну тытма пăрахрĕ, Германие поражени кӳрес ĕçе вăл материальнăй пулăшу пачĕ, халĕ Японие хирĕç кĕрешес ĕçре союзниксемпе пĕрлешрĕ. Итали хăех фашистла режимран ирĕке тухрĕ, демократиллĕ управление тата демократи учрежденийĕсене аталантарас енĕпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Италин йышăннă демократиллĕ правительствипе çавăн пек мирлĕ договор туни виçĕ Правительствăна Итали Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн членне илме ыйтнине хута кĕме май парать.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕ çине Болгари, Финлянди, Венгри тата Румыни пирки мирлĕ договорсем хатĕрлес задачăсене те хунă. Çав государствăсенчи йышăннă демократиллĕ правительствăсемпе мирлĕ договорсем туни виçĕ Правительствăна вăл государствăсем Пĕрлешнĕ нацисен организаци членне илме ыйтнине хута кĕме пулăшать. Виçĕ Правительство, кашни уйрăмăн, сывăх вăхăтра, ун чухнехи условисем тăрăх, Финляндипе, Румынипе, Болгарипе тата Венгрипе мирлĕ договорсем тăвиччен вăл çĕршывсемпе дипломатиллĕ çыхăнусем йĕркелес ыйтăва пăхса тухма пулаççĕ.

Виçĕ Правительство çакна шанса тăраççĕ: Европăра вăрçă пĕтнĕ хыççăн лару-тăру улшăннă пирки союзниксен пичечĕн представителĕсем Румынири, Болгарири, Венгрири тата Финляндири лару-тăру çинчен тĕнчене пĕлтерсе тăрас ирĕкпе туллин усă курма пултарĕç.

Ытти государствăсене Пĕрлешнĕ нацисен организацине кĕртес ыйтăва илсен, Пĕрлешнĕ нацисен уставĕнчи тăваттăмĕш статьяра çапла калапă:

«1. Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн членне мире юратакан ытти пур государствăсене те илеççĕ. Çав государствăсем Уставра палăртнă обязательствăсене хăйсем çине илеççĕ пулсан тата çав обязательствăсене пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ пулсан, вĕсене организаци членне илме пултараççĕ.

2. Çавăн пек кирек епле государствăна та Пĕрлешнĕ нацисен членĕ шутне илесси Хăрушсăрлăх Совечĕ сĕннипе Генеральнăй ассамблея йышăннă постановлени тăрăх пулмалла».

Виçĕ Правительство, вăл ыйту вĕсене тивет пулсан, вăрçă вăхăтĕнче никам майлă та пулман государствăсем, вĕсем çӳлте асăннă ĕçсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ пулсан, члена илме ыйтнине хута кĕме пултараççĕ.

Виçĕ Правительство тата çакна ăнлантарса пама кирлĕ тесе шутлаççĕ: вĕсем хăйсем енчен хальхи Испани правительстви члена илме ыйтнине хута кĕме шутламаççĕ. Тĕнĕл держависем пулăшнипе туса хунă хальхи Испани правительствин, вăл камран тăни енĕпе те, хăйĕн характерĕпе те, ĕçĕсемпе те тата агрессор-государствăсемпе таччăн çыхăнса тăнипе те çав организацире член пулмалли пахалăхсем çук.

XI.
ОПЕКĂНА ИЛНĔ ТЕРРИТОРИСЕМ ÇИНЧЕН

Конференци опекăна илнĕ территорисем çинчен Совет Правительстви сĕннĕ ыйтăва пăхса тухнă. Ку ыйтăва Крымри конференцин решенийĕнче тата Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн уставĕнче палăртнипе килĕштерсе татса панă.

Пĕр-пĕрин шухăшĕсене каласа панă хыççăн çапла йышăннă: Итали аллинче пулнă колонисем пирки ыйтăва Итали валли мирлĕ договор тăвассипе çыхăнтарса татса памалла, Итали колонийĕсем тĕлĕшпе тăракан ыйтăва Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕ сентябрь уйăхĕнче татса парать.

XII.
РУМЫНИРИ, БОЛГАРИРИ ТАТА ВЕНГРИРИ СОЮЗНИКСЕН КОНТРОЛЬ КОМИССИЙĔСЕН ĔÇĔСЕНЕ ПĂХСА ТУХАССИ ÇИНЧЕН

Виçĕ Правительство çакна палăртнă: Румынири, Болгарири тата Венгрири союзниксен Контроль Комиссийĕнчи Совет представителĕсем Пĕрлештернĕ Королевствăн тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсене халĕ, Европăра вăрçă чарăннă хыççăн, Контроль Комиссийĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе сĕнӳ панă.

Виçĕ Правительство çапла килĕшнĕ: халĕ çав çĕршывсенчи союзниксен Контроль Комиссийĕсен ĕçĕсене пăхса тухмалла. Вĕсене пăхса тухнă чухне виçĕ правительствăн, тивĕçлĕ çĕршывсем умне перемири условийĕсем кăларса тăратнăскерсен, интересĕсемпе ответлăхне шута илсе, килĕштерсе тунă сĕнӳсене никĕс выранне хурса татса памалла.

XIII.
ГЕРМАНИ ХАЛĂХНЕ КУÇАРАССИНЕ ЙĔРКЕЛЕССИ

Нимĕçсене Польшăран, Чехословакирен тата Венгрирен куçарас тĕлĕшпе конференцире çапла каласса татăлнă.

Виçĕ Правительство, ыйтăва пур енчен те пăхса тухса, Польшăра, Чехословакире тата Венгрире юлнă нимĕç халăхне е унăн пайне куçармалла тесе йышăннă. Вĕсене кирек епле куçарнă чухне те ку ĕçе организованно тата этеме юратмалла майсемпе тумалла тесе шутлаççĕ. Нимĕç халăхне Германие халăх куçарса килни Германири оккупаци влаçĕсен ĕçне йывăрлатнă пирки, виçĕ Правительство çапла шутлаççĕ: çак ыйтăва чи малтанах Германири Контроль Совечĕ, çав нимĕçсене оккупаци пур зонисене те тивĕçлипе вырнаçтарассине шута илсе, тĕпчесе вĕренмелле. Виçĕ Правительство хăйсен Контроль Советĕнчи представителĕсене çапла тума инструкци параççĕ: нимĕç халăхĕ Польшăран, Чехословакирен тата Венгрирен мĕн чухлĕ куçса килни çинчен май килнĕ таран хăвăртрах доклад туса пама тата Германири хальхи вăхăтри лару-тăрăва шута илсе, çак халăха малашне мĕн тери хăвăртрах куçарса килме май пурри çинчен каласа пама хушаççĕ.

Çав вăхăтрах çак çӳлте асăннă ыйту çинчен Чехословаки правительствипе Польшăн вăхăтлăх правительствине тата Венгрири союзниксен Контроль Комиссине каласа параççĕ, вĕсене ку ыйтăва Контроль Советĕнчи хăйсен представителĕсен доклачĕсене тивĕçлĕ правительствăсем пăхса тухиччен нимĕç халăхне çав çĕршывсенчен кăларса яма чарăнма хушаççĕ.

XIV.
ВĂРÇĂ ЫЙТĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН КАЛАÇНИ

Конференци вăхăтĕнче виçĕ Правительствăн Штаб начальникĕсем тĕл пулса пĕр-пĕрне интереслентерекен ыйтусем çинчен калаçнă.

XV.
А. СОВЕТ СОЮЗĔН ДЕЛЕГАЧĔСЕН СПИСОКĔ

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Генералиссимус **И. В. Сталин.**

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов.**

Флот адмиралĕ **Н. Г. Кузнецов.**

Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штаб начальникĕ **А. И. Антонов.**

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ **А. Я. Вышинский.**

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ **С. И. Кавтарадзе.**

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ **И. М. Майский.**

Главнăй Тинĕс-Çар Штабĕн начальникĕ адмирал **С. Г. Кучеров.**

Совет Союзĕн Великобританири послĕ **Ф. Т. Гусев.**

Совет Союзĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи послĕ **А. А. Громыко.**

Наркоминдел Коллегийĕн членĕ, Европăри 2-мĕш отделăн заведующийĕ **К. В. Новиков.**

Наркоминдел Коллегийĕн членĕ, США отделĕн заведующийĕ **С. К. Царапкин.**

Наркоминделăн Европăри 1-мĕш отделĕн заведующийĕ **С. П. Козырев.**

Наркоминделăн Балкан тавращĕнчи çĕршывсен отделĕн заведующийĕ **А. А. Лаврищев.**

Германири Совет Çар Администрацийĕн Главноначальствующин помощникĕ **М. З. Сабуров.**

Германири Совет Çар Администрацийĕн Политика отделĕн начальникĕ **А. А. Соболев.**

Наркоминделăн эксперт-консультанчĕ **С. А. Голунский.**

В. АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ДЕЛЕГАЧĔСЕН СПИСОКĔ

Президент **Гарри С. Трумэн.**

Государство Секретарĕ **Джемс Ф. Бирнс.**

Флот адмиралĕ **Вильям Д. Леги,** Президент сумĕнчи Тинĕс-Çар Флочĕн Штаб начальникĕ.

Джозеф Е. Дэвис, специальный посол.

Эдвин Поули, специальный посол.

В. Аверелл Гарриман, СССР-ти посол.

Арми генералĕ **Джордж С. Маршалл,** Пĕрлешӳллĕ Штатсен Çар Штабĕн начальникĕ.

Флот адмиралĕ **Эрнст Д. Кинг,** США-н Тинĕс-Çар Флочĕн оперативный отдел начальникĕ тата США-н Флот Главнокомандующийĕ.

Арми генералĕ **Г. Г. Арнольд**—США-н Сывлăшри вăйĕсем.

Генерал-лейтенант **Брегон Б. Сомервелл,** Арми службин командующийĕ.

Вице-адмирал **Эмори С. Ленд,** Тинĕс-Çар транспорчĕн начальникĕ.

Вильям Л. Клейтон, Государство Секретарĕн помощникĕ.

Джемс С. Данн, Государство Секретарĕн помощникĕ.

Бен Коген, Государство Секретарĕн специальнăй помощникĕ.

Г. Фримен Мэтьюс, Государство департаменчĕн Европа отделĕн директорĕ.

Чарльз Е. Болен, секретарь помощникĕ (политика, çар тата техника советникĕсемпе пĕрле).

С. ПĔРЛЕШӲЛЛĔ КОРОЛЕВСТВО ДЕЛЕГАЧĔСЕН СПИСОКĔ

Премьер-министр: **Уинстон С. Черчилль** господин, **К. Р. Эттли** господин.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ: **Антони Иден** господин, **Эрнест Бевин** господин.

Лорд Лезерс, Çар транспорчĕн министерстви.

Сэр **Александр Кадоган,** Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн яланхи заместителĕ.

Сэр **Вальтер Монктон,** Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Мускаври репараци Комиссийĕнчи делегаци пуçлăхĕ.

Сэр **Вильям Стрэнг,** Германин Британи оккупациленĕ зонинчи Главнокомандующийĕн политика советникĕ.

Сэр **Арчибальд Кларк Керр,** унăн Величествин Мускаври послĕ.

Сэр **Эдвард Бриджес,** Министрсен кабинечĕн секретарĕ.

Фельдмаршал сэр **Алан Брук,** Империн Генеральный Штаб начальникĕ.

Королĕн Сывлăш вăйĕсен маршалĕ сэр **Чарльз Портал,** Авиаци Штабĕн начальникĕ.

Флот адмиралĕ сэр **Эндрью Каннингэм,** пĕрремĕш Тинĕс лорчĕ.

Генерал сэр **Хастингс Исмэй,** Оборона Министрĕн Штаб начальникĕ.

Фельдмаршал сэр **Гарольд Александер,** Вăтаçĕр Тинĕс тавращĕнчи союзниксен Верховный Командующийĕ.

Фельдмаршал сэр **Генри Мейтланд Вильсон,** Вашингтонри Пĕрлештернĕ Штабри Британи миссийĕн пуçлăхĕ тата ытти советникĕсем те.

И. СТАЛИН.
Гарри ТРУМЭН.
К. Р. ЭТТЛИ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Силос хывни	Çаран утти çулнă	Акнă курăксем çулнă	Курăк вăрлăх участокĕсем уйăрни
Сĕнтĕрвăрри	121,0	100,0	55,1	77,9
Комсомольски	101,1	82,7	47,2	93,5
Вăрнар	100,5	108,1	95,3	100,0
Чурачăк	95,5	100,0	43,4	73,6
Шăхасан	89,2	100,0	70,6	96,5
Чкаловски	87,1	110,0	48,5	100,0
Тăвай	85,8	100,8	26,7	100,0
Йĕпреç	83,0	100,0	78,8	72,0
Советски	80,8	108,2	69,3	78,9
Элĕк	77,2	89,5	61,8	88,0
Куславкка	77,2	95,4	9,2	100,0
Ишлей	74,4	106,9	31,5	91,2
Улатăр	73,6	76,2	—	100,0
Етĕрне	73,5	111,2	80,6	87,6
Вăрмар	73,2	100,0	52,4	100,0
Октябрьски	71,2	99,2	71,5	100,0
Шупашкар	70,6	103,3	48,1	70,4
Канаш	70,5	76,8	28,6	100,0
Çĕрпӳ	69,2	100,0	38,3	72,5
Сĕнтĕр	68,0	123,5	38,1	55,0
Первомайски	67,7	132,1	24,6	50,0
Çĕмĕрле	67,7	83,4	22,4	57,1
Шăмăршă	67,4	105,3	—	37,6
Елчĕк	65,5	102,8	53,8	60,3
Красноар-ски	65,2	100,3	92,8	103,8
Хĕрлĕ Чутай	65,2	101,0	43,4	84,3
Муркаш	65,0	102,0	19,3	52,8
Калинино	56,4	100,0	100,4	87,4
Пăрачкав	47,7	76,2	4,1	80,0
Кувакино	21,2	100,3	—	79,0

13 колхоз ыраш вырма тухнă

ЧКАЛОВСКОЕ, августăн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). «Большевик», «Путь Ленина», «РОКК», «Гвардеец», «Красный Октябрь», Киров, Чкалов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те районĕпе пурĕ 13 колхоз, суйласа ыраш вырма тухрĕç.

Вырма тухнă колхозсенче пуринче те уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах кăçал «Путь Ленина» колхозра (председателĕ В. Горшкова юлташ) тырă вырма лайăх хатĕрленсе тухрĕç.

— Халĕ тырă хăмăлĕ типсе çитмен чухне тата тырă пĕрчи тăкăнман чухне ытларах çавапа çулас пулать,—теççĕ колхозниксем. Çак колхозри К. Такмакова юлташ хăйне уйăрса панă участокра 0,5 гектар çулса пуснă. Задорова, Яковлева, Комиссарова, Уфукова, Гаврилова колхозницăсем те хăйсене уйăрса панă участоксенче 0,35-шер гектар ыраш вырнă. Кунта хĕрӳллĕ ĕç пырать, колхозниксем çĕрле те кăнтăрла та хирте ĕçлеççĕ.

Кашни колхозрах столовăйсем ĕçлеме тытăнчĕç.

Анчах та малтанхи вăхăтра çак çитменлĕхсене курма пулать. Чылай колхозсенче çурлапа кăна выраççĕ, çавасемпе çулассине организацилемен тата машинăсемпе ĕçлессине те пуçарса яман.

Районри ытти колхозсем те пиçсе çитнĕ вырăнсене паян-ыран суйласа вырма тытăнаççĕ. Çак вăхăтрах уйрăм колхозсенче чăтма çук çапăнăçусăрлăх тата ответсăрлăх курма пулать. Ыраш вырма тытăнма вăхăт çитнĕ пулсан та «Пламя Октября» колхозра (председателĕ Краснов юлташ) çурласене шăллатса, çавасене туптаса хатĕрлемен, жнейкăсемпе молотилкăсем юсавсăр. Çак колхоз ялхуçалăх ĕçĕсенче иртнĕ çулсенче те кая юлса пынă май, кăçал начар тырпул çитĕнтерчĕ. Иртнĕ çулхи йăнăшсенчен Краснов юлташ кирлĕ пек вывод туман.

М. МИРОНОВА.
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Суйласа ыраш вырма тытăннă

Республикăри хăшпĕр колхозсем суйласа ыраш вырма пуçăнаççĕ. Августăн 3-мĕшĕ тĕлне Елчĕк районĕнче 20 колхоз ытла ыраш вырма тытăннă. Вĕсен шутĕнче Хĕрлĕ Ялавлă Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз, «Трактор», «Осоавиахим», «Марс», «Комбайн», Крупская, Чапаев ячĕсемпе тăракан колхозсем пур. Кунта ыраша пиçсе çитнĕ вырăнсенче çурласемпе выраççĕ, машинăсемпе вырма йăрап уçаççĕ тата комбайнсемпе вырса пухмалли участоксене хатĕрлеççĕ.

Чкаловски районра 13 колхоз суйласа ыраш вырма тухнă. Уйрăмах «Путь Ленина» колхозра (председателĕ В. Горшкова юлташ) ĕç ăнăçлă пырать. Унта уйрăм сдельщинăпа усă курнă май çурлапа выракансем тата çавапа çулакансем нумайĕшĕ кулленхи нормăна малтанхи кунсенчех нумай ирттерсе тултараççĕ. Паянхи куна Вăрмар районĕнче 8 колхоз, Пăрачкав районĕнче 7 колхоз, Комсомольски районра 3 колхоз, Улатăр районĕнче 3 колхоз, Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз суйласа ыраш вырма тытăннă. Çавăн пекех Чурачăк, Çĕрпӳ, Шăхасан, Калинино тата ытти хăшпĕр районсенче те уйрăм колхозсем суйласа ыраш вырма тытăннă.

Хаçатра пичетленсе тухман çырусем тăрăх

Пирĕн редакцине Октябрьски районри «Коммунизм» колхоз членĕсем, çак колхозăн председателĕ Семенов ялхуçалăх артелĕн уставне пăсни, колхозри учетпа отчет ĕçне кирлĕ пек йĕркелеменни, колхоз пурлăхне салатса пĕтерни тата 2.500 тенкĕ колхоз укçине хăйне валли салатса яни çинчен çырса пĕлтернĕччĕ.

Çак çырура çавăн пекех тата иртнĕ çул тырпул пухса кĕртнĕ чухне пысăк тăкак туни тата çулса пухнă клевер уттине çĕртсе яни çинчен çырнăччĕ.

Çак çырăва тĕрĕсленĕ хыççăн Октябрьски районри прокурор А. Д. Дмитриев юлташ çырура кăтартнă çитменлĕхсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Çав çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме тăрăшманшăн тата колхоз пурлăхне салатнăшăн «Коммунизм» колхоз членĕсен пухăвĕнче Семенова колхоз председателĕнчен кăларнă.

СССР Наркомземĕнче

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ машинно-тракторнăй станцисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту итогĕсене пăхса тухса, 1945 çулхи çуркки планне тултарнăшăн тата ирттерсе тултарнăшăн пĕтĕмпе 50 МТС-а СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçаллă премисем пама йышăннă. Куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава тата укçаллă премин илме тивĕçлĕ пулнă МТС-сем хушшинче Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар МТС-ĕ (директорĕ Никонов юлташ) пур.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океан çинчи тинĕçри вăйĕсен командующийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Америка армийĕн авиацийĕ Японин çĕрĕнчи тĕрлĕ вырăнсенче промышленность объекчĕсемпе çулйĕрсене, çавăн пекех тата японецсен Кюсю утравĕнче тăракан суднисене тапăннă.

ВАШИНГТОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: августăн 1-мĕшĕнче американецсен пĕр пысăк линкорĕ Уэйк утравне пенĕ. Линкорпа пĕр вăхăтрах вăл утрава Америка авианосецĕсем çинчен вĕçсе улăхнă самолетсем те тапăннă.

Америка тинĕс авиацийĕн самолечĕсем Корейăри объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

ВАШИНГТОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтерет: августăн 2-мĕшĕнче ирхине американецсен «Вĕçекен крепость» ятлă хăватлăран та хăватлă 800 бомбардировщикĕ, Мариан утравĕсем çинче вырнаçса тăраканскерсем, Японие вăйлăн тапăннă, вĕсем Хонсю утравĕ çинчи пысăк промышленноçлă Хоцгодзи, Тояма, Нагаока, Нито тата Канасаки хулисем çине 6.000 тонна бомба пăрахнă.

ШВЕЦИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВĂН СОСТАВĔ

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндири радио пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине Швеци правительствин составĕ улшăннă.

Çĕнĕ правительствăна çаксем кĕреççĕ: премьер-министр Ганссон, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Эстен Унден профессор, оборона министрĕ—Аллан Фогт, социальнăй обеспечени министрĕ—Густав Меллер, çулйĕр ĕçĕсен министрĕ — Торстен Нильссон, финанс министрĕ—Эрнст Вигфорс, просвещенипе культсен министрĕ—Эрландер, çĕрĕç министрĕ—Пер Эдвин Шельд, суту-илӳ министрĕ—Гуннар Мюрдаль, снабжени министрĕ—Аксель Герес, юстици министрĕ—Герман Секребер.

АФИНЫ ТĔРМИНЧЕ ПОЛИТИКА ĔÇĔСЕМШĔН ХУПНĂ ÇЫНСЕНЕ ПЕНИ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулинчи Залокостас тĕрминчи часовойсем политика ĕçĕсемшĕн хупнă çынсене, вĕсем кантăк уçса янă вăхăтра, пăшалпа пеме пуçланă. Тĕрмере ларакан 3 çын аманнă. Влаçсем вĕсене чӳречене ватса тĕрмерен тарасшăн пулнă тесе айăплаççĕ. Тĕрмере лараканнисем каланă тăрăх, вĕсем камерăра çав тери пăчă пулнă пирки чӳрече уçасшăн çеç пулнă.

ПАТРЫ ХУЛИНЧЕ СОВЕТ ФИЛЬМĔСЕНЕ КĂТАРТМА ЧАРНĂ

АФИНЫ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Патры хулинчи полици начальникĕ Совет Союзĕн кинокартинисене кăтартма чарнă. Çак ĕçе губернатор пĕлсе тăрать тата шалти ĕçсен министрĕ ырланă. Çакăнпа пĕрлех Грецире гитлерла Германи хăй вăхăтĕнче кăларнă 300 фильма яхăн кăтартаççĕ. Греци влаçĕсем çав картинăсене кăтартма чармаççĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Сĕнтĕрвăрринчи Вăрман техникумĕ

столяр ĕçне тата сĕтел-пукансем тума вĕрентекен отделенийĕ, вăрман хатĕрлев отделенийĕн тата вăрман хуçалăх отделенийĕн пĕрремĕш курсне вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникума çичĕ çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă çынсене илеççĕ. Техникума вĕренме кĕрес текеннисем çакăн пек документсемпе пĕрле заявленисем параççĕ: ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, автобиографи, виçĕ сăн ӳкерчĕкĕ, Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнипе кăтартакан справка (ăна çара каймаллисен ямалла), сывлăх çинчен врачран илнĕ справка. Документсене копийĕсене мар, хăйсене ярса памалла. Заявленисене документсемпе пĕрле çак адреспа ямалла: гор. Мариинский Посад, Майская 30, Лесотехникум.

Заявленисене кăçалхи августăн 20-мĕшĕччен илеççĕ. Сентябрĕн 7-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче çак предметсемпе экзаменсем пулаççĕ: çичĕ çул вĕренмелли шкулăн программи тăрăх математикăпа, вырăс чĕлхипе, СССР Конституцийĕпе.

1943—44 тата 1944—45 вĕренӳ çулĕсенче çичĕ çул вĕренмелли шкултан „отлично" паллăпа вĕренсе тухнă çынсене техникумăн 1-мĕш курсне вĕренме экзаменсăрах илеççĕ.

Техникумра 1945 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Вĕренме илнисене пурне те общежитие вырнаçтараççĕ, вĕренмелли кĕнекесем параççĕ тата столовăйĕнче апатлан.араççĕ, зачетсем вăхăтра парса пыракансене стипенди параççĕ. Вăрман техникумĕн хăйĕн ОРС пур. Вĕренекенсене промышленность таварĕсене вăрман промышленноçĕнчи 2-мĕш категорири рабочисемпе пĕрган параççĕ.

Техникум усăлни 50 çул тултарать. Техникумра вĕренмелли кабинетсем, столярнăй тата сĕтел-пукан тумалли мастерскойсем, автотрактор паркĕ, электростанци тата ыттисем те пур.

Шупашкарти пир-авăр фабрики сумĕнчи ФЗУ шкулĕ çакăн пек специальноçлă рабочисене вĕрентме илесси çинчен пĕлтерет: ткачсем, мастер помощникĕсем, ватерщицăсем, банкаброшницăсем, строительсем. 14 çултан иртнĕ çамрăксене илеççĕ. Вĕренме илнисене общежитие вырнаçтараççĕ, кĕпе-тумтир параççĕ, тӳлевсĕр виçĕ хутчен апат çитереççĕ тата уйăхне 75—140 тенке стипенди параççĕ. Профессисене кура 9 уйăхран пуçласа 2 çул таран вĕренмелле.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ленинградская, 3.

Шупашкарти электромеханика техникумĕ çакна пĕлтерет:

СССР Совнаркомĕ 1945 çулхи июлĕн 2-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, техникумра кăçал сентябрĕн 1 мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ. Çакна пула техникума вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисене 1945 çулхи августăн 20-мĕшĕччен çеç илеççĕ.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем августăн 21-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—83, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—93, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—93, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00324. Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. г. Тираж 16.000